Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Яковлев Иван Яковлевич

## Книга: Уҫӑлма тухнӑ шӑши ҫури = A little mouse ona walking tour

## Рассказ: Ӗнепе качака таки

Пӗр карчӑкӑн ӗнепе качака таки пулнӑ. Ӗнепе качака таки кӗтӗве пӗрле ҫӳренӗ. Ӗни сунӑ чухне пӗртте тӑп тӑман. Пӗрре карчӑк тӑвар сапса ҫӑкӑр илсе тухнӑ та ӗнене йӑпатса:

– Тӑп тӑр, айван, ме, ме, тӑп тӑрсан тата илсе тухса парӑп, – тенӗ.

Тепӗр каҫхине качака таки кӗтӳрен ӗнинчен маларах таврӑнать те карчӑк умне пырса урисене чаркаласа та тӑрать. Карчӑк ӑна ал шӑллипе хӑмсарать. Качака таки шӑпах тӑрать, тапранмасть те. Вӑл карчӑк ӗнине тӑп тӑрсан ҫӑкӑр парӑп тенине манман.

Карчӑк качака таки итлеменнине курать те ӑна патак илсе ҫаптаркаласа ярать. Качака таки кайсан карчӑк каллех ӗнине ҫӑкӑр парса йӑпата пуҫлать. Качака таки вара шухӑшлать: «Ку ҫынсен тӗрӗсси-мӗнӗ ҫук иккен. Эпӗ ӗнерен те лайӑхрах тӑтӑм, ҫапах ҫаптарчӗ мана», – тет.

Хайхи аяккарах каять те чупса пырса тараст! тутарать карчӑка. Карчӑк сӗчӗ-мӗнӗпех пӑлтӑр-палтӑр чикеленсе кайрӗ тет вара.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.